Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

78 (8039) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ăнăçу никĕсĕ – пĕрлехи тăрăшулăхра

“Свобода” ăратлă выльăх заводĕнчи Кашмашри сысна ферминче 15 çул ĕçлекен Андрей Петрович Белов сысна пăхакана, 4-мĕш çул машинăпа ĕне сăвакан операторта вăй хуракан Светлана Вячеславовна Анисимовăна (сулахайри) тата хуçалăхра 15 çул тĕп зоотехникра ĕçлекен Эльвира Фадеевна Замятинăна куратăр. «Пирĕн пĕрлехи ĕçрен хуçалăх аталанăвĕ килет», – терĕç вĕсем канашлу пуçланиччен сăн ӳкерттернĕ май.

Ферма ĕçченĕсем район администрацийĕн Хисеп грамотине, хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх отраслĕ диплома тивĕçни хастарсем хăйсен ĕçĕнче ответлăха туйнине çирĕплетет те.

А. БЕЛОВ
сăн ӳкерчĕкĕ.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

Октябрĕн 14-мĕшĕнче – суйлав

Сасăлав йĕркеллĕ ирттĕр

Аса илтеретпĕр. Çитес вырсарни кун, октябрĕн 14-мĕшĕнче, Муркаш, Чуманкасси тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче пурăнакансен суйлава хутшăнмалла пулать. Вĕсен хăйсен ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйламалла. Асăннă кунччен вăхăт нумаях юлмасть. Вăхăт çитиччен ирттерекен суйлава хатĕрленесси епле пыни пирки Муркаш территори суйлав комиссийĕн председательне Лилия Юрьевна ТАРАСОВĂНА каласа пама ыйтрăм.

– Çапла, Муркаш, Чуманкасси тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсенче пурăнакансен унченхи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем вырăнне çĕнĕ çынсене суйлас пулать.

Кандидатсем пурте паллă. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма 3 çынна кандидата тăратнă. Кусем вĕсем Евгений Николаевич Алексеев, Сергей Николаевич Ермолаев тата Владимир Владиславович Ямангеев. Чуманкасси ял тăрăхĕпе икĕ кандидат: Николай Валерианович Белов тата Юрий Геннадьевич Леонтьев. Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидатсем те иккĕн – Анатолий Николаевич Кузьминпа Андрей Михайлович Степанов.

Суйлав участокĕсем Муркаш ял тăрăхĕнче 3, Чуманкасси ял тăрăхĕнче 2 тата Йӳçкасси ял тăрăхĕнче 4 пулаççĕ. Унченхи пекех суйлав участокĕсем ирхи 8 сехетре ĕçлеме тытăнаççĕ. 20 сехетре суйлав вĕçленет. Унччен пурин те сасăлава хутшăнма ĕлкĕрес пулать.

Кашни çын хăйĕншĕн хăй сасăлать. Тепĕр суйлавçăшăн сасăлама юрамасть. Суйлава паспортпа пымалла. Енчен те кам та пулин тĕрлĕ сăлтава пула суйлав участокне пыраймасть пулсан, унăн октябрĕн 14-мĕшĕнченхи 14 сехетчен суйлав участокне заявлени çырса памалла. Кун пеккисене киле пырса сасăлатарĕç.

Суйлав участокĕсенче видеорегистраторсем вырнаçтараççĕ. Участоксене хураллассине те пăхса хунă. Çавна май суйлав ирттернĕ çĕрте йĕркене пăснă тĕслĕхсем пулма кирлĕ мар.

Суйлавçăсене çавна каласа хăварасшăн. Вырăнти пурнăç, апла пулсан хăвăрăн пурнăç мĕнле пуласси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тилхепине эсир кама шанса панинчен килет. Апла пулсан пурте суйлава хутшăнма тăрăшăр, тивĕçлишĕн сасăлăр.

Суйлавра хăш кандидат çĕнтернине палăртассин йĕрки ансат. Кандидатсенчен хăшĕ ыттисенчен ытларах сасă пухнă – вăл ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланать.

Калаçава вĕçленĕ май Муркаш, Чуманкасси тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсенчи суйлавçăсене октябрĕн 14-мĕшĕнчи суйлава активлă хутшăнма чĕнсе калатăп.

В. ШАПОШНИКОВ
калаçнă.

Çывăх вăхăтрах усă курма пуçăнăпăр

Универсаллă электронлă карттăсем

Универсаллă электронлă карттăсемпе усă курма тытăнма çывăх вăхăтрах хатĕрленсе çиттмелле. Кун пирки информаци технологийĕсене пурнăçа кĕртес ыйтупа видеоконференци режимĕпе октябрĕн 2-мĕшĕнче иртнĕ Правительство комиссийĕнче каланă. Регионсен представителĕсемпе канашлăва РФ çыхăну тата массăллă коммуникацисен министрĕ Николай Никифоров тата «УЭК» ОАО федераллă уполномоченнăй организаци ертӳçи Алексей Попов ирттернĕ. Канашлу ĕçне Чăваш Ен Правительствин вице-премьерĕ – Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин пуçлăхĕ Алла Самойлова, республика информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева та хутшăннă.

Аса илтеретпĕр, Раççейре универсаллă электронлă карттăсене 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пама пуçăнаççĕ. Тепĕр çулталăкран ку вăл обязательнăй пулса тăрать. Çавна та асăнса хăварас пулать. Граждансем универсаллă электронлă карттăсене илмесен те пултараççĕ. Апла тăвас пулсан картта кирлĕ марри пирки заявлени çырмалла та субъектăн уполномоченнăй организацине памалла.

Чăваш Енре халĕ универсаллă электронлă карттăсем туса хатĕрлес, валеçес тата вĕсене пăхса тăрас енĕпе хатĕрленӳ ĕçĕсем пыраççĕ. Республика Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн «Об организации деятельности по выпуску, выдаче и обслуживанию универсальных электронных карт в Чувашской Республике» йышăнăвĕн проектне туса хатĕрленĕ. Документра универсаллă электронлă карттăсене (УЭК) çитерсе парассин тата унăн дубликатне парассин, УЭК регионсенчи тата муниципаллă электронлă хушăмĕсемпе усă курассин йĕркисене, вĕсен техника требованийĕсене палăртнă. 2012 çулхи сентябрĕн 26-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕ «Об универсальной электронной карте» саккун проектне ырларĕ. Халĕ ăна Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн çывăх сессийĕнче пăхса тухма хатĕрленеççĕ. Чăваш Республикин универсаллă электронлă карттине пурнăçа кĕртме 28,5 миллион тенкĕне яхăн кирлĕ пулать.

«УЭК» ОАО федеральнăй уполномоченнăй организацийĕн президенчĕ Алексей Попов регионсене УЭК пурнăçа кĕртессин планĕпе паллаштарнă. Вăл темиçе хатĕрлев тапхăрĕнчен тăрать. Çапах та вăхăт нумай пăхса хуман. Акă октябрĕн 5-мĕшĕччен çĕршыв субъекчĕсен карттăна пурнăçа кĕртессишĕн ответлине палăртмалла, мониторинг ирттермелле, федераллă уполномоченнăй организаци правилисемпе çыхăнасси енĕпе килĕшӳсем тумалла.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

«Кĕр парнисем» ярмăрккăна чĕнетпĕр

Çак ятпа Муркашра октябрĕн 12-мĕшĕнче ял хуçалăх продукцийĕ сутассипе ярмăрккă иртет.

Ирхине 9 сехетрен тытăнса ял хуçалăх предприятийĕсенче, фермер хуçалăхĕсенче, çынсен хушма хуçалăхĕсенче туса илнĕ ял хуçалăх продукцине туянма май пулĕ. Ярмăрккă вĕçленичченех (14 сехет çурăччен) Муркаш тата Мăн Çĕнтĕр райповĕсен суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсем, ытти предприятисемпе организацисен суту-илӳ точкисем ĕçлĕç.

10 сехетрен сцена çинче художество пултарулăх коллективĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартĕç.

Çав вăхăтрах актовăй залра шкул ачисен ĕç пĕрлешĕвĕсен слечĕ пуçланать. Унта çуллахи ĕç чĕрĕкĕн итогĕсене пĕтĕмлетĕç. Методкабинетра ачасен пултарулăхĕн выставкипе паллашма май пулĕ.

Эрне кунах районта пуçласа ирттерекен «Сам себе режиссер» конкурсăн итогĕсене пĕтĕмлетĕç, кунпа пĕрлех – «Семья года» конкурс итогĕсене те.

Пурне те «Кĕр парнисем» ярмăрккăна йыхравлатпăр.

Республикăра

Ял тăрăхĕсен 25 пуçлăхне суйлĕç

Чăваш Республикин территорийĕнче пĕрлехи сасăлав кунĕнче, октябрĕн 14-мĕшĕнче, ял тăрăхĕсен 25 пуçлăхне, депутатсен районти Пухăвĕсен 12 депутатне тата ял тăрăхĕсен халăх суйлакан органĕсен 12 депутатне суйламалла пулать. Суйлав муниципаллă 17 район территорийĕнче иртет. Суйлавçăсен списокĕсене 44 пине яхăн суйлавçăна кĕртнĕ.

2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнчи даннăйсемпе суйлава регистрациленĕ 134 кандидат хутшăнать. Вăл шутран 46 кандидата Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕ, 24 кандидата Раççейри либерал-демократсен партийĕ, 13 кандидата Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ, 4 кандидата «Справедливая Россия» политика партийĕ сĕннĕ. Регистрациленĕ 48 кандидат хăйсене хăйсем кандидата сĕннĕ.

Суйлав уççăнлăхне тивĕçтерме 89 суйлав участокĕнче пуринче те видеосăнав пулĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

Ĕç шыракансем валли

Ĕç рынокĕнчи çивĕчлĕхе чакарас тата ĕç шыракансене вăхăтра юрăхлă ĕç тупса парас тĕлĕшпе ĕç тата вĕренӳ вырăнĕсен ярмăрккисене ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Вĕсене районти ĕçпе тивĕçтерекен центр тăтăшах йĕркелет. Çакă ĕçсĕррисен ретне лекнĕ граждансене ĕç рынокĕнчи лару-тăру тĕлĕшпе май пур таран тулли информаци илме, вакансисем, ĕç паракансем, çынсене ĕçпе тивĕçтерессинчи патшалăх услугисем пирки тĕплĕнрех пĕлме май парать.

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр кăçалхи 9 уйăх хушшинче кун пек ярмăрккăсене 5 йĕркеленĕ. Вăл шутра ятарлă ярмăрккăсем яш-кĕрĕм, пенсие тухнисем тата пенсие тухма хатĕрленекенсем валли те ирттернĕ.

Вакансисен 4 ярмăрккине пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен представителĕсем тата çул çитмен граждансем хутшăннă. Çул çитменнисене вăхăтлăх ĕçсене явăçтарма май килнĕ. Вакансисен тематикăллă ятарлă пĕр ярмăрккине пенсие тухма хатĕрленекен тата пенсири граждансене ĕçпе тивĕçтерес ыйтупа йĕркеленĕ. Унта 2 организаци представителĕпе ĕçпе тивĕçтерекен центрта учетра тăракан 7 çын хутшăннă.

Кĕскен

Çурт картишĕсем илемленĕç

Муркаш салинчи нумай хваттерлĕ çуртсем таврашĕсене тата вĕсем патне пымалли çулсене юсама тытăнчĕç.

Муркаш ял тăрăхĕнче ирттернĕ аукциона «Дорстрой» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ тата «Дорожное эксплуатационное предприятие № 146» акционерсен уçă пĕрлешĕвĕ çĕнтерчĕç.

Ленин урамĕнчи (28-мĕш çурт), Хĕрлĕ лапамри (4 тата 6-мĕш çуртсем), Гагарин урамĕнчи (20-мĕш çурт) çуртсем таврашĕнчи ĕçсене «Дорстрой» пурнăçлать.

«ДЭП №146» пĕрлешĕвĕн аукцион пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх Октябре 50 çул урамри (28 тата 30-мĕш çуртсем), çавăн пекех Заводская урамри ĕçсене пурнăçламалла.

Паянхи куна «Дорстрой» Хĕрлĕ лапамра ĕçсене пуçаннă.

Иртнĕ кунсенче Çурлатри ял урамĕнче çул тăвассипе йĕркеленĕ аукционăн çĕнтерӳçине те палăртнă. Унта та çитес вăхăтрах çул сарас ĕçсем пуçланаççĕ.

Т. МЕШКОВА,
ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлаканĕ.

Кама мĕн канăç памасть?

Тӳрĕ лини

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ыйтăвĕсемпе район хаçатĕнче тӳрĕ лини йĕркелесси пирки унччен хыпарланăччĕ. Кĕтнĕ пекех, вулакансенчен редакцие ыйтусем сахал мар килчĕç. Хаçатăн паянхи номерĕнче вĕсем çине район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Германович НИКИТИН хуравлать.

– Эпĕ Михаил Иванович Дмитриев. Йӳçкасси ялĕнчи Молодежная урамри 10 хваттерлĕ çуртра пурăнатпăр. Çурт «Ударник» хуçалăхăн шутланать. Хăшĕсем хваттерсене приватизациленĕ, хăшĕсем – çук. Хваттерсене электроэнергипе хутса ăшăтатпăр. Ăшă шыв çук. Хĕллехи вăхăтра хваттерте шыв шăнса ларать. Малашне мĕнле пурăнмалла – пĕлместпĕр. Килсе курăр тархасшăн.

– Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Йӳçкасси ялĕнче вырнаçнă нумай хваттерлĕ çуртсем «Ударник» федераллă патшалăх унитарлă предприяти (ФПУП) балансĕ çинче шутланаççĕ. Асăннă çуртсене тĕп котельнăйран хутса ăшăтмаççĕ. Çавăнпа та сирĕн ку ыйтупа баланса тытса тăракан (балансодержатель), тепĕр майлă каласан, «Ударник» ФПУПа тухас пулать.

– Эпĕ, Нина Константиновна Константинова, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, Мăн Сĕнтĕрте пурăнатăп. Мана пирĕн патра хăçан мунча ĕçлеме тытăнасси интереслентерет.

– Мăн Сĕнтĕрти мунча унпа усă курни тăкаклă пулнă пирки ĕçлемест. Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакансенчен мунчара çăвăнакансем питĕ сахал. Çав вăхăтрах вара ĕç персоналне тытса тăрас пулать, электроэнергипе, ăшă энергийĕпе, шывпа, канализаципе усă курнăшăн тӳлемелле.

– Муркашри Парк урамĕнче çурт хыççăн çурт çĕкленет. Савăнмалла. Анчах кунта пурăнакансене çакă пăшăрхантарать. Юлашки çулсенче кунта трансформатор хута яман, шыв башни лартман. Пурăнакансен йышĕ ӳснĕрен шыв, электричество çитми пулмĕ-и?

– Муркаш ялне аталантарассин генеральнăй планĕпе пăхнă пек Парк урамĕнче пĕрин хыççăн тепри çурт çĕкленет. Унччен хурса хăварнă коммуналлă инфраструктура хăйĕн хăвачĕн саппасĕпе паянхи куна тивĕçтереймест. Çĕнĕрен тунă çуртсене унпа çыхăнтарнă май коммуналлă инфраструктурăна май пур таран тулли хăватпа ĕçлеттерме тивет. Çавăнпа та хушма хăватсем ĕçе кĕртессипе проектсем туса хатĕрлеме пăхнă. Ку ĕçсене çывăх çулсенчех пуçăнмалла.

– Муркашри Парк микрорайонĕнче çĕнĕ 7 çурт. Анчах вĕсене пĕр-пĕринпе тротуарсемпе çыхăнтарман. Çапла, подъезд умĕнче тротуарĕ пур, анчах центра е магазина тухас пулсан е автоçулпа, е пылчăк çăрса утма тивет.

– Парк урамĕнче строительство ĕçĕсем туса ирттернĕ чухне тирпей-илем кĕртес енĕпе те ĕçсем пурнăçлаççĕ, çавăн пекех тротуарсем те хываççĕ. Магазин ертӳçисем Парк урамĕнче магазин тунă чухне магазинран нумай хваттерлĕ çуртсем патне асфальт сарнă тротуарсем те тума палăртнă.

– Çуртсем çывăхĕнчи автоçулсене çӳп-çапран камăн тасатса тăмалла?

– 2007 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕнче йышăннă 257-ФЗ № «Об автомобильных дорогах и о дорожной деятельности в Российской Федерации и о внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» Федераллă саккунăн 13-мĕш статйипе килĕшӳллĕн автомобиль çулĕсемпе усă курасси тата çул-йĕр çинчи ĕçсене пурнăçласси вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тивĕçĕ шутне кĕрет. Нумай хваттерлĕ çуртсем çывăхĕнчи çулсем ял тăрăхĕсен балансĕ çинче тăраççĕ. Çавна май вĕсене çӳпçапран ял тăрăхĕсен çак ĕçе ятарлă организацисене яваçтарса тасатса тăмалла.

– Муркашра çăмăл автомашинăсен хисепĕ ӳссех пырать. Гараж кооперативĕ тăвас ыйтăва çĕклеме вăхăт мар-и?

– Автомашинăсене усрассин ыйтăвĕ çивĕч тăрать. Ку проблемăна йĕркеллĕ, чи пĕлтерĕшли вара – цивилизациллĕ майпа татса парас тесен гараж кооперативĕ йĕркелес пулать. Чи малтанах пуçару ушкăнĕ пухмалла, автомашина хуçисене гаражсен комплексне йĕркеленин малашлăхĕпе интереслентермелле. Пуçару ушкăнĕ гараж кооперативĕ йĕркелес тĕлĕшпе тунă йышăнава документпа çирĕплетет. Пуçару ушкăнĕн гараж кооперативĕн уставне туса хатĕрлес пулать. Унта кооперативăн пурлăхне йĕркелессин, укçатенкĕ ăçтан пуçтарăнассин ыйтăвĕсене анлăн уçса памалла. Ытларах чухне кусем вĕсем кооператива кĕмелли тата пай взносĕсем, кунсăр пуçне кооператив членĕн тата тĕллевлĕ взноссем т. ыт. те. Учредительнăй документсен пуххине регистрацилемелле те регистраци вырăнĕнчи налук инспекцийĕнче учета тăратмалла.

Гараж кооперативне уçиччен банкра пĕрлешĕвĕн расчет счетне тата гараж кооперативĕн членĕсен лицевой счечĕсене уçас пулать. Çакă вĕсене пай взносĕсене хывма кирлĕ.

Хыççăн çĕр участокĕ суйласа илнин актне хатĕрлемелле пулать, унпа усă курма аренда килĕшĕвĕ тумалла. Кайран тĕрĕсленĕ строительство организацийĕпе гараж кооперативĕн проектне туса хатĕрлеме тата строительство ĕçĕсене пурнăçлама килĕшӳ тумалла. Гараж кооперативне йĕркеленине регистрацилени вăл гаражсен харпăрлăхĕн хуçи пулса тăнине пĕлтерет. Харпăрлăх хуçин правине çирĕплетме кирлĕ документсене Патшалăх регистрацийĕн, кадастрăн тата картографин федераллă службин управленине тăратмалла та ятарлă свидетельство илмелле.

– Мĕншĕн Муркашра хутса ăшăтмалли сезон ялан Шупашкартинчен эрне кая юлса пуçланать? Çынсем пурпĕрех ăшăнмалли майсем шыраççĕ. Электричество, газ çунтараççĕ. Тăкакĕ ытларах та пулĕ. Кун пек чухне инкек те пулма пултарать.

– Раççей Федерацийĕн Правительствин 2011 çулхи майăн 6-мĕшĕнчи 354 № «О предоставлении коммунальных услуг собственникам и пользователям помещений в многоквартирных домах и жилых домов» йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн енчен те ăшă энергийĕ çурт-йĕре хутса ăшăтма çуртсенчи инженери системисене инженерипе техникăн централизациленĕ системисем урлă пырса тăрать пулсан, ĕçе пурнăçлакан (исполнитель) хутса ăшăтмалли тапхăра уполномоченнăй орган палăртнă вăхăтра пуçлать. Хутса ăшăтмалли тапхăра йĕркипе 5 кун хушшинче тулти сывлăшăн талăкри вăтам температури 8 градусран каярах пулсан тепĕр кунне тытăнма тивĕç.

Енчен те нумай хваттерлĕ çурта ăшă централизациленĕ майпа пырса тăмасть, исполнитель ăшă парассин коммуналлă услугипе нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакансене вĕсен пĕрлехи харпăрлăхĕнче шутланакан оборудованипе усă курса тивĕçтерет пулсан, хваттерсене хăçан ăшă пама тытăнассин датине нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакансем е пурăнмалли çуртсен хуçисем хăйсен пĕрлехи йышăнăвĕпе палăртаççĕ. Енчен те нумай хваттерлĕ çуртри хваттер хуçисен кун пек пĕрлехи йышăну пулмарĕ пулсан вара хваттерсене хутса ăшăтма ăшă энергине уполномоченнăй орган палăртнă йĕркепе парса тăма тытăнма тивĕç. Сăмах май, октябрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа хваттерсене ăшă панă ĕнтĕ.

– Нумай хутлă çуртсенчи хваттерсене уйрăмшар хутса ăшăтмалла тăваççĕ. Хаклă пулсан та хваттер хуçисем укçа тупаççĕ. Муркашра пур çурта та çак йĕрке çине куçарма пултараççĕ-и?

– Хальхи вăхăтра нумай хваттерлĕ çуртсен 70 процентне, уйрăм çынсен пурăнмалли çурчĕсен 100 процентне харпăр хăй хутса ăшăтать. Хальхи вăхăтра кварталсенчи пысăк котельнăйсене тытса тăни тăкаклă, ăшă энергийĕпе тивĕçтерсе тăнă çĕрте пысăк çухатусем пулаççĕ. Çавна май ăшă энергийĕн тарифĕ ӳснĕ май ку вăл пĕтĕмпех хваттерсенче пурăнакансен хул пуççийĕ çине тиенет. Çавăнпа та 100 процентчĕпех хваттерсене харпăр хăй хутса ăшăтасси çине куçнине нимĕн те çитмест.

– Ача сачĕсенче хутса ăшăтмалли тапхăра маларах уçма май çук-и? Халĕ вара чылай ашшĕ-амăшĕ садиксенче сивĕ тесе ачисене унта яма тăхтаса тăрать.

– Çулленех муниципаллă йĕркелӳре социаллă сфера объекчĕсене (шкулсене, ача сачĕсене, больницăсене) пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен маларах хутса ăшăтма пуçăнаççĕ.

– Хутса ăшăтмалли сезон пуçăнман пирки больницăсенче сивĕ. Сывалас вырăнне унта сипленекенсем чирлесе пĕтмеççĕ-и?

– Муркаш районĕнче сывлăх сиплевĕн учрежденийĕсене 2012 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ăшăпа тивĕçтерме пуçăннă ĕнтĕ.

В. ШАПОШНИКОВ
хатĕрленĕ.

Универсаллă электронлă карттăсем

Çывăх вăхăтрах усă курма пуçăнăпăр

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Декабрĕн 1-мĕшĕччен вара даннăйсем памаллин хӳтĕленĕ каналăн ĕçне йĕркелемелле, УЭК информаци системисене туса кăларассине, унпа усă курассине тивĕçтермелле, кунпа пĕрлех заявленисем йышăнмалли тата УЭК памалли пунктсене ĕçлеттерме тытăнмалла, регионсен нормативлă акчĕсене çирĕплетмелле, УЭК туса хатĕрлеме тата персоналлă даннăйсене кĕртме уполномоченнăй организацисемпе килĕшӳсем тумалла. Декабрĕн çурри тĕлне карттăсемпе усă кураксен электронлă сервиссемпе, вăл шутра патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе усă курма майсем пулмалла. Кунпа пĕрлех Николай Никифоров çавна та палăртнă. Пĕтĕмĕшле илсен çĕр-шыври субъектсенче патшалăх услугисемпе усă курассине çĕнĕлле йĕркелес тата электронлă хутшăнусен системипе усă курма тытăнас енĕпе хатĕрленӳ ĕçĕсем яп ăх шайра мар.

Çак вăхăта УЭК çĕр-шывăн пилĕк регионĕнче пама пуçаннă. Кусем вĕсем Мускав облаçĕ, Тутар Республики, Краснодар крайĕ, Астрахань облаçĕ тата Пушкăрт Республики.

Мĕнле даннăйсем упранаççĕ-ха карттăра? Çын кам пулнине ĕнентерни пур, кунпа пĕрлех тĕрлĕ хушăмсем. Вăл шутра банкăн тӳлев картти те. Картта çынна патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе усă курма май парать, унпах çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемшĕн, çыхăнушăн, çул çӳренĕшĕн, магазинра тавар туяннăшăн тӳлеме май пулĕ. Кунсăр пуçне УЭК электронлă цифра мелĕпе алă пуснине çирĕплетме май парать. Çапла вара унченхи пек услугăсемшĕн тӳлеме вырăна кайса çӳремелле пулмасть. Карттăна тӳлевсĕрех параççĕ. Республикăри уполномоченнăй организаци – Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Медицинский информационно-аналитический центр» бюджет учрежденийĕ.

«Общественное мнение» фондăн 2012 çулхи сентябрь уйăхĕнчи даннăйĕсем тăрăх çĕр-шывра пурăнакансенчен çурри ытла универсаллă электронлă карттăсемпе усă курни кирлĕ тесе шутлать. Респондентсен 52 процентĕ УЭК меллĕ тесе палăртнă. Кун пек шухăшлакансем вĕсем ытларахăшĕ 30 çулчченхи çынсем. Ыйтнă çынсенчен 27 процентĕ электронлă карттăсене хирĕç пулнине пĕлтернĕ. Çынсем тĕрлĕ ултавран тата карттăна çухатасран шикленеççĕ.

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.

Спортпа мĕн ачаранах туслă пулмалла

Çамрăк спортсменсене хавхалантаракан савăнăçлă ăмăрту Тойкилтĕре кăçалхипе тăваттăмĕш хут иртрĕ. Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕн В. Даниловăн парнисене çĕнсе илме 14 команда пухăнчĕ.

Владислав Григорьевич Тойкилтĕ шкулне пĕтернĕ. Шкул вăхăтĕнчех спорта килĕштернĕрен кайран та вăл спортран аякра тăман. Тепĕр тесен спортпа туслă мар çын çакăн пек ăмăрту йĕркелемен те пулĕччĕ.

«Пурте спортсмен пулаймасть, паллах. Анчах эсир кунта ăмăртма килни те çĕнтерӳ. Мала тухма пултарнисем те, финиша каярах çитекенсем те паян хăйсем валли ума çĕнĕ тĕллевсем лартĕç. Спортпа туслисем вара тĕллевсене яланах пурнăçлама пултараççĕ. Çавăнпах мĕн пĕчĕкрен спортпа туслă пулăр», – тенипе пĕрлех Владислав Григорьевич хаклă парнесем хатĕрленине те, спонсорсем чылай пулнине те палăртрĕ.

Спонсорсем кăçалхи ăмăртура чăнах та нумайăн пулчĕç: районти массăллă спорта аталантарассинчен нихăçан та аякра тăманскерсем, ку ăмăртăва та парнесемпе килнĕ. Вĕсем: «Моргаушскавтотехсервис» ертӳçи Л. Дмитриев, «Заря» пĕрлешӳ ертӳçи П. Терентьев, Муркаш пасарĕн директорĕ Е. Субботин, Москакассинчи пасар директорĕ Г. Михайлов, «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх директорĕ С. Тимофеев, В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн директорĕ А. Сидюшкин, «БТИ» предприяти ертӳçи В. Калинин, «Россельхозбанкăн» Муркашри хушма офисĕн ертӳçи И. Павлова, «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК» учреждени директорĕ А. Куликов, Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М. Колесникова.

Парнесем чылайччĕ. Ăмăрту пуçланичченех Владислав Григорьевич хăйĕн тăван шкулне тĕрлĕ мечĕксем парнелерĕ. Ачасене саламланă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев çакна каласа хăварчĕ:

В. Данилов парнисемшĕн иртнĕ ăмăрту

«Кашни шкулăн кун пек выпускниксем çук. Акă, сăмахран, Владислав Григорьевич мечĕксем те кашни çулах парнелет, сывă пурнăç йĕркине тытса пыма хистет. Çакă питĕ лайăх. Сывлăхлă ăру ӳсни вара пирĕншĕн пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ», – терĕ.

Ку ăмăртура акă 1–5-мĕш вырăнсене тухнă шкулсен командисем пурте волейбол мечĕкĕсене тивĕçрĕç. В. Даниловăн хĕрĕ Марина Владиславовна вара кашни командăна пылак парне – тортсем – парса хавхалантарчĕ.

Старта чи малтан уйрăм ӳсĕмпе тухнă шкул çулне çитмен пĕчĕк ачасене те (вĕсенчен чи кĕçĕнни 2008 çулта çуралнă Ксения Толстова пулчĕ) финишра Владислав Григорьевич кашнинех шăккалатсемпе тата ятарлă парнесемпе кĕтсе илчĕ. Пĕрремĕш хавхалантару çапла пулмалла та ĕнтĕ. Каярах вара вĕсен çитĕнĕвĕсене те сăнама май пулĕ.

Чи хăвăрт чупакансене – Калайкассинчи вăтам шкулти Стас Ершова тата Муркашри вăтам шкулта вĕренекен Анна Милютинăна асăнмалăх кроссовкисем парнелерĕç.

2002 çулта çуралнисен тата кĕçĕнреххисен стартĕнчен пуçласа аслă ӳсĕмрисем таранах уйрăм чупусем иртрĕç. Вĕсене сăнама питĕ кăмăллă пулчĕ.

Финиш хыççăн ачасем шкул столовăйĕнче вĕри апат çиме пултарчĕç. Ăмăртăва килекенсене шкул алăкĕ умĕнче çăкăр-тăварпа ăшшăн кĕтсе илекен Тойкилтĕсем çапла хăналани тĕлĕнтермерĕ те, вĕсен ăшă кăмăлне тепĕр хут палăртрĕ çеç.

Командăсенчен çĕнтерӳçĕ ятне Çатракассинчи вăтам шкул илме тивĕç пулчĕ. 2-мĕш вырăнта – Муркаш шкулĕ, 3-мĕш Ярапайкассисем пулчĕç. Призлă вырăн йышăннисене грамотăсемпе парнесем парса чысларĕç. Ыттисем вара çитес ăмăртăва лайăхрах хатĕрленме шантарчĕç.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сăн ӳкерчĕкре: пĕрремĕш старт.

Саламлатпăр

Пирĕн ĕçтешĕмĕре, Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практика врач офисĕнче ĕçлекен **Вера Васильевна ПАВЛОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Эпир сана юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, хĕвел ăшши пек чун ăшши, çемье телейĕ, ачасен, мăнуксен, тăвансен, пускилсен, ĕçтешсен юратăвне сунатпăр. Паянхи кун пекех ялан хаваслă пул.

Пĕрле ĕçлекенсем.

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене, ырă кăмăллă хуньстарике, ылтăн алăллă кукаçие – Хуракасси выççăлккинче пурăнакан **Герман Леонидович АЛЖИРОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр.

Пурнăç çулĕ такăр пултăр,
Ан хавшатăр сывлăху,
Тулăх кĕр пек пуянлантăр
Ырăпа сан кăмăлу.
Çитнĕ ĕмĕт вăй-хал кўтĕр,
Çиртĕр йывăр кунсенĕ.
Чун ăшши нихçан ан сўнтĕр
Сан хĕрўллĕ чĕрўнте.

Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрўшĕсем, ывăлĕ, 3 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.

Юратнă пиччене, куккана – Чуманкасси ялĕнче пурăнакан **Иван Димитриевич ВЯЗОВА** 90 çулхи юбилей ячĕпе тата юратнă **Тамара Николаевнăпа** çемье çавăрнăранпа 65 çул çитнĕ ятпа ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кунçул сунатпăр. Эсир пурри – пирĕншĕн пысăк савăнăç, телей. Сирĕн анлă кĕрекў ачусене, мăнукусене, кĕçĕн мăнукусене, тăвансене ялан хапăл тутăр. Тата нумай çул пире савăнтарса пурăнăр. Эпир сире чăннипех çав тери юрататпăр, хисеплетпĕр, сирĕнтен тĕслĕх илсе пурăнатпăр.

Салампа: Волковсен, Вязовсен, Лескинсен, Суворовсен çемйисем тата йышлă тăванĕ.

Çатракассинчи вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен кăмăллă та пултаруллă ĕçтешĕмĕре, юратнă вĕрентекенĕмĕре **Елена Гавриловна ПРОКОПЬЕВĂНА** юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пĕрле ĕçлекенсемшĕн те, вĕренекенсемпе ашшĕ-амăшĕшĕн те – ялан ырă тĕслĕх. Çакна курса эпир санран тăтăш вĕренме, хамăр ĕç кăтартăвĕсене ўстерме тăрăшатпăр. Пурнăçра хăв суйласа илнĕ çулпа татах нумай çул таса сывă пурăнма сĕнетпĕр.

Саламлаканĕсем: ĕçтешĕсемпе вĕренекенĕсем.

Постановления

ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА МОРГАУШСКИЙ РАЙОН
АДМИНИСТРАЦИЯ БОЛЬШЕСУНДЫРСКОГО СЕЛЬСКОГО ПОСЕЛЕНИЯ
ПОСТАНОВЛЕНИЕ
04.10. 2012 г. № 95
село Большой Сундырь
О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»

В соответствии со статьей 28 закона Российской Федерации от 06.10.2003г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст.14 Устава Большесундырского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17:060402:77. 27 октября 2012 года в 10 часов 00 минут в администрации Большесундырского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Б. Сундырь, улица Советская, 16.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Çĕнтерў ялавĕ»

Глава сельского поселения А.В. ЛАПТЕВ.

Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»

Руководствуясь п. 10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учётом результатов публичных слушаний администрации района постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:060402:77 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, улица Новая, с разрешенного использования «для строительства выставочного зала» общей площадью 110 кв.м. на вид разрешенного использования «для строительства и содержания зданий и сооружений».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 27.10.2012 года до 9-00 часов.

Постановление администрации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики №76 от 08.10.2012 года.
О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

В соответствии со ст.28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Москакасинского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 17 сентября 2012 года в 13 часов 30 минут в здании администрации Москакасинского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, деревня Москакасы, улица Московская, дом 54 (проект прилагается).

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

Глава Москакасинского сельского поселения А.Н. МАТРОСОВ.

Проект муниципального правового акта
Об изменении разрешенного использования земельного участка

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:09 10 01:0076, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д.Сидуккасы, ул. Сидуковская, д.№38 б общей площадью 600 кв.м., с «для ведения личного подсобного хозяйства» на «для строительства и эксплуатации магазина».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 17.10.2012 года до 9-00 часов.

Район администрацийĕн йышăнăвĕ

Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсен иртнĕ хĕл каçнă тапхăрне шутласа 2012 çулхи пĕрремĕш çур çулхи районти экономика ăмăртăвĕ çинчен

Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсен экономика ăмăртăвне пĕтĕмлетсе район администрацийĕ çапла йышăнать:

1. Выльăхсене хĕл каçарас тапхăрти ĕçсене хакласа тата 2012 çулхи пĕрремĕш çур çулти экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕпе çаксене çĕнтерўçĕсем тесе йышăнас тата вĕсене район администрацийĕн Дипломĕсемпе наградăлас:

1.1. Хĕл каçнă тапхăрта сĕт сăвассине пĕтĕмĕшле 776,1 тоннăна çитернĕшĕн тата çак тапхăрта кашни ĕне пуçне вăтамран 3880 килограмм сĕт сума пултарнăшăн – **Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативне (ертўçи – Владимир Славич Андреев)**. Пĕрремĕш çур çулта асăннă хуçалăхри ферма ĕçченĕсем 117,4 центнер аш-какай, 629,9 центнер сĕт туса илнĕ. Çур çулта кашни ĕне пуçне вăтамран 3165 килограмм сĕт сунă хуçалăх ĕçченĕсем самăртма хупнă сыснасене талăксерен 402 грамм, мăйракаллă шултра выльăхсене 724 грамм ўт хуштарнă.

1.2. **Ярославка ял тăрăхĕнчи Чемей ялĕнчи Александр Аркадьевич Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхне**. Кунта асăннă тапхăрта 29,3 центнер сĕт сунă, аш-какай туса илессине 38 процент ўстерсе 174,5 центнера çитернĕ.

1.3. **Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Анаткассинчи сĕт фермине (заведующийĕ – Валентина Валерьяновна Макарова)**. Çур çулта кашни ĕне пуçне вăтамран 3165 килограмм сĕт сунă хуçалăх ĕçченĕсем пĕтĕмĕшле кăтартăва 633 тоннăна çитернĕ.

1.4. **«Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ ăратлăх завочĕн Кашмашри сысна фермине (тĕп зоотехникĕ Эльвира Фадеевна Замятина)**. Коллектив аш-какай туса илессине 10,4 процент ўстерсе 909 центнера çитернĕ. 100 ама пуçне 1066 çура илсе, сыснасене талăксерен вăтамран 404 грамм ўт хуштарма пултарнă.

1.5. **«Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ ăратлăх завочĕн Йўтĕркассинчи мăйракаллă шултра выльăх фермине (комплекслă бригада ертўçи Григорий Геннадьевич Белов)**. Коллектив самăртма хупнă выльăхсене талăксерен вăтамран 964 грамм ўт хуштарса 265 центнер аш-какай туса илме мехел çитернĕ.

2. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшуллă та ўсĕмлĕ ĕçленĕшĕн, ĕçри продуктивлăхпа палăрса тăнăшăн çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлас:

– «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ ăратлăх завочĕн Кашмашри сысна ферминче сыснасене самăртнă çĕрте ĕçлекен **Андрей Петрович БЕЛОВА**;

– «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ ăратлăх завочĕн Кашмашри сĕт ферминче ĕнесене машинăпа сăвакан оператора **Светлана Вячеславовна АНИСИМОВĂНА**;

– Александр Аркадьевич Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ĕçлекен **Алевтина Александровна ЯРУСОВĂНА**;

– «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕнче нумай çул ĕнесене машинăпа сăвакан операторта ĕçлекен **Валериян Иванович НАУМОВА**;

– «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕнче нумай çул ĕнесене машинăпа сăвакан операторта ĕçлекен **Анфиса Михайловна НАУМОВĂНА.**

Вăхăтпа тан пыма ялан çĕнĕлĕх кирлĕ

Кăçалхи çанталăк условийĕсем çĕр ĕçченне те, обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче вăй хуракана та хытах тĕрĕслени куç умĕнчех. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен пĕрремĕш çул çулти тата паянченхи ĕçне тишкерме пухăннă канашлăва пуçланă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев танлаштарăва тĕпе хурса Чапаев яч. хис., «Передовик» хуçалăхсен ертўçисемпе специалисчĕсенчен тата фермăра ĕçлекенсенчен хăйсен ĕçне тишкерме, çиччĕ виççе хак пама ыйтрĕ. «Ма çывăратăр эсир?» – пулчĕ пуçлăх ыйтăвĕ.

Акă кăçалхи çур çулхи ĕçсене пĕтĕмлетнĕ май хуçалăх ертўçисем тата зооветспециалистсемпе выльăх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем канашлу умĕн пĕр-пĕринпе тĕл пулса хăйсене пăшăрхантаракан ыйтусем тавра калаçусем ирттерме те ĕлкĕрчĕç. Йывăрлăхсем умĕнче пуç усмасть пулсан ял çынни малашлăхпах пурăнать. Мĕнре-ха ăнăçусен сăлтавĕ? Çак ыйту çине хурав шыраса ирттерчĕç вĕсем пĕр пĕринпе калаçу.

– Ёмĕтленни мĕлке пулса ан юлтăр тесе тăрăшатпăр. Юлашки çулсенче хуçалăхра сысна самăртмалли çĕнĕ сарай хута яни, унта ĕçлеме пире тивĕçлĕ условисем туса пани, паха апатпа вăхăтра тивĕçтерни ĕçлес туртăма ўстерет. Çавăнпах виççĕмĕш çул ĕнтĕ хамăр ферма территорине пĕрле ĕçлекенсем тимленипе чечек çăтмахĕ туса хутăмăр. Кунтах пахча çимĕç те ўстеретпĕр. Пирĕн коллективри кашни ĕçчен фермăри ĕçсене килти пек пурнăçланипе сарайсем таврашĕнче тирпейлĕх хуçаланать, – палăртрĕ “Свобода” ăратлă выльăх заводĕнчи Кашмашри сысна ферминче ĕçлекен Андрей Белов.

Ёçлекенсем ўсĕм çулĕнчен юлманни çак канашлура та курăнчĕ. Малалла пăхакана патшалăх та пулăшать. Кăçалхи пĕрремĕш çул çулта районти АПК предприятийĕсене патшалăх енчен пĕтĕмпе 51 миллион та 778 пин тенкĕ пулăшу пулнă. Çав шутра федераллă бюджетран – 37 миллион та 408 пин тенкĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслне илсен республика бюджетĕнчен килнĕ пулăшу 6 миллион та 378 пин тенкĕпе танлашнă. Вăл шутран 3900 килограмм ытла сĕт антаракан продуктивлă ĕнесене тытма 1 миллион та 951 пин тенкĕ; ăратлă ама выльăх тытса тăма 75 пин тенкĕ; килти хушма хуçалăхри ĕнесене пĕтĕлентерме вăрлăх туянма 4 пин тенкĕ; ăратлă çамрăк выльăх туянма 725 пин тенкĕ.

Раççей Федерацийĕн бюджетĕнчен килнĕ пулăшу вара самай курăмлăрах. Ăратлă выльăх-чĕрлĕхе тытса тăма – 1 миллион та 436 пин тенкĕ, пысăк продуктивлă ĕнесем тĕлĕшпе федераци шайĕнчен 1 миллион та 960 тенкĕ пулăшу килнĕ. Кунсăр пуçне продуктивлă выльăхшăн, ăратлă выльăх туяннăшăн, ăратлă çăмартасем туяннăшăн, вăкăр вăрлăхĕ туяннăшăн тата июнь – август уйăхĕсенче сĕт реализациленĕшĕн 9 миллион та 404 пин те 808 тенкĕ илме пултарни те – çĕр ĕçченĕшĕн пулăшу.

Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕç ўсĕмĕнче эсир сăн ўкерчĕкре (сулахайра) куракан Валентина Николаевна Печкова тўпи те пĕчĕк мар. Çакна пĕтĕмлетў канашлăвĕнче те пĕрре мар палăртрĕç. Тăхăр уйăх хушшинче çак доярка хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 4308 килограмм сĕт сума пултарнă.

В. Печковăпа юнашар асăннă хуçалăхăн тĕп зоотехникне Г. Васильевăна куратăр. Галина Владимировна канашлура хăйсем ытларах продукци илессипе епле ĕçлени пирки каласа пачĕ. «Ёне патĕнчен апат татăлмасть. Çакăнтан сăвăм çулĕ пуçланать», – терĕ тĕп зоотехник.

Мăйракаллă шултра выльăхсене самăртса хуçалăхсем 356 тонна, сыснасем патĕнче 365 тонна аш-какай туса илнĕ. Çак кăтартусем унченхи çулхинчен пĕчĕкрех пулни ку енпе хуçалăхсенче ĕçлемелли пуррине çирĕплетет. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем çапла тăваççĕ те. Пĕрремĕш çур çулта самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен унченхи çулхинчен 69 грамм (564 грамм), сыснасем 68 грамм (406 грамм) ытларах ўт хушнă. Мăйракаллă шултра выльăхсем «Герой», Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., «Свобода», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче талăксерен 600-шер грамм ытла ўт хушнă. Çавăн пекех «Свобода», «Герой», Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсенче сыснасен ўт хушаслăхĕ те ыттисенчен палăрмаллах пысăк.

Иртнĕ тапхăрта пĕтĕм категориллĕ хуçалăхсем пурĕ 2175 тонна аш-какай туса илнĕ. Ку вăл унченхи çулхин 96,4 проценчĕ çеç. Ял хуçалăх предприятийĕсенче 735,1 тонна (82,6 процент) аш-какай туса илнĕ пулсан, ял çыннисен хуçалăхĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче – 1439,9 тонна.

Пĕтĕмĕшле кăтартусене илсен кăçалхи пĕрремĕш çур çулта иртнĕ çулхи çак вăхăтпа танлаштарсан аш туса илесси 14 процента майлă чакнă. Сăвăм вара 0,7 процент ўссе 4497,4 тоннăпа танлашнă. Кунта çакна каласа хăвармалла: ĕнесен продуктивлăхĕ савăнтарсах каймасть. Районĕпе илсен пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 2178 килограма кăна çитнĕ. Пĕр хуçалăх кăна – Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ – 3 пинлĕ чикĕрен иртнĕ: кунта кашни ĕне пуçне 3165 килограмм сĕт сунă. Асăннă хуçалăхри Валентина Николаевна Печкова оператор кăтартăвĕ вара хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕне пуçне 4308 килограмм сунипе танлашать. Районти экономика ăмăртăвĕн условийĕсемпе килĕшўллĕн çак хуçалăхри татах 5 доярка сĕт сăвассипе 3 пинлĕ чикĕ урлă каçнă. Вĕсем: Надежда Валентиновна Михайлова (3463 кг), Фаина Юрьевна Антоновăпа Надежда Евгеньевна Журавлева (3349 кг), Надежда Николаевна Орлова (3028 кг). «Свобода» хуçалăхри Нина Пименовна Федоровăн кăтартăвĕ – 3013 килограмм.

Паян районти хуçалăхсенче кашни ĕне пуçне вăтамран 9,9 килограмм сĕт сăваççĕ. Çав хушăрах 13 килограмм ытларах сăвакансем те пур. Вĕсем: Суворов яч. хис., «Путь Ильича» агрофирма, Чкалов яч. хис., Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсем.

Çитес хĕл кунĕсем валли районти çĕр ĕçченĕсем 5,5 пин тонна утă, 16,8 пин тонна сенаж, 19,1 пин тонна силос янтăланă.

Фермăсене хĕле хатĕрлесси – паян умра тăракан чи ответлă ĕçсенчен пĕри. Кунта та Муркашсем алă усмасса шанас килет.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ўкерчĕкĕ.

Юнкăсем каллех малта

Спорт

Иртнĕ кĕçнерни кун Ярапайкассинчи тĕп шкулта 2000 çулта çуралнă тата кĕçĕнрех арçын ачасем футбол турнирне пухăнчĕç. Таврари шкулсенчен килнĕ командăсем пурте мала тухас шухăшпа пуçтарăннă, паллах, анчах та чăн-чăн çĕнтерӳçĕне хĕрӳ вăйăсем урлă кăна пĕлме пулать çав. Йĕпе-сапа çанталăк вара çамрăк спортсменсене татах та вăйлăрах тĕрĕслерĕ.

Çак турнирта Юнкăри вăтам шкулта вĕренекен футболистсене çитекенни пулмарĕ. Çăвĕпех футболла выляни, ял тăрăхĕнче турнирсем ирттерни вĕсемшĕн питĕ усăллă пулнă. Вăйăсем вĕçленсен иккĕмĕш вырăна кил хуçисем тухни паллă пулчĕ. Виççĕмĕшсем – Калайкассинчи вăтам шкул командин футболисчĕсем.

Йĕркене кĕнĕ тăрăх уйрăм выляканcене те палăртрĕç: «Чи лайăх тапăнакан тата бомбардир» – Владимир Михайлов (Юнкă), «Чи лайăх хӳтĕлевçĕ» – Алексей Ефимов (Ярапайкасси), «Чи лайăх çурма хӳтĕлевçĕ» – Дмитрий Данилов (Юнкă), «Чи лайăх вратарь» – Алексей Кудряшов (Калайкасси).

Мини-футболла вылярĕç

Иртнĕ шăмат кун Тивĕшре Болеслав Павлова асăнса мини-футбол вăйăисем питĕ интереслĕ иртрĕç. Унта пилĕк команда вăй виçрĕ: «Муркаш», «Шетмĕ», Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн командисем, «МетПласт» тата Мăн Сĕнтĕр райповĕн командисем.

Çак вун иккĕмĕш хут иртнĕ ăмăртура кам çĕнтернине, ăмăртăва мĕн тĕллевпе, ăна кам йĕркелени тата мĕншĕн-ха республика шайĕнче иртнĕ ăмăртура кăçал Муркашсене кăна хутшăнма ирĕк пани пирки тĕплĕнрех çитес номерте вуласа пĕлме пултаратăр.

Çуллахи биатлонра

Октябрĕн 6–7-мĕшĕсенче Шупашкарта çуллахи биатлон енĕпе республика ăмăртăвĕ иртнĕ. Пысăк ăмăртăва районти «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК» вĕрентӳ учрежденийĕн Ярапайкассинчи уйрăмĕн спортсменĕсем хутшăннă. Эдуард Гордеев аслă тренерăн воспитанникĕсем малтисен йышне кĕме пултарнă. 1996–1997 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче ăмăртнă Светлана Соколова 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ, Диана Чернова виççĕмĕш пулнă.

Н. НИКОЛАЕВА.

Конкурсный отбор для кадрового резерва

Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Администрация Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 11 октября 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учётом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справка, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления по 10 ноября 2012 года включительно по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д.Ярославка ул. Центральная д.5.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 64-7-33, эл. почта mrgjros_pos@cbx.ru официальный сайт администрации Ярославского сельского поселения.

Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Моргаушского района Чувашской Республики

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Моргаушского района Чувашской Республики с 10 октября 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

1) личное заявление;

2) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

3) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

4) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

5) копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

6) копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

7) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

8) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

9) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления (по 08 ноября 2012 года включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: с. Моргауши, ул.Мира, д.6, каб. 308, 307.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 62-4-37, эл. почта org1@morgau.ru, официальный сайт администрации Моргаушского района Чувашской Республики.

Прогноз погоды

	среда 10 октября				четверг 11 октября				пятница 12 октября				суббота 13 октября			
Местное время	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00
Облачность %																
Осадки мм																
Температура °С	+11	+12	+12	+8	+6	+9	+12	+8	+7	+9	+12	+9	+6	+8	+10	+7
Давление мм	736	734	738	742	744	747	748	749	748	749	748	745	741	739	738	739
Влажность %	94	90	81	79	90	77	61	86	97	86	80	86	95	89	77	89
Ветер м/сек	5	5	9	6	5	6	5	3	3	3	1	3	3	2	4	3
	Ю-В	Ю	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю-З	Ю	Ю	Ю	В	В	В	Ю-З	Ю-З	Ю-З
Солнце восход / заход		07:15	18:03			07:17	18:01			07:19	17:58			07:21	17:56	
Луна восход / заход		01:40	15:47			02:58	16:06			03:02	16:24			04:23	16:41	

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 2-10.

Заводские пластиковые окна в 2 раза дешевле! Замер, доставка бесплатно! Тел.: 8-906-385-29-30. 2-10.

Пĕлтерӳсем. Объявления

ООО «Виктория»

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.

Работа в Москве и МО: фасовщицы, упаковщицы, грузчики, комплектовщики. Жилье, питание, транспорт – БЕСПЛАТНО. Вахта 15, 20, 30, 45 дней, з/п от 27 000 руб. (своевременная). Тел.: 8(8352) 36-42-92, 36-42-94. 3-5.

* * *

Продам: кровати армейского образца – 1000 руб.; матрац, подушка, одеяло – 700 руб.; дверь металлическая производство Китай – 3000 руб. Доставка бесплатная. Тел.: 8-915-051-94-23, 8-916-417-06-84. 3-12.

* * *

СХПК им В.И. Чапаева требуется главный инженер. Оплата достойная. Жилье предоставляется.
Тел.: 8-906-380-58-39.

* * *

Требуются рабочие на уборку и сортировку картофеля (мужчины и женщины) в д. Шатьмапоси. Привозим и отвозим, а также обед за счет работодателя.
Тел.: 8-906-388-66-66.

* * *

В объявлении участника долевой собственности Трофимовой Людмилы Дмитриевны, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 13 мая 2006 г. в № 40 (7357), стр. 5, в 1 колонке вместо «площадью 1,34 га (пашни)» следует читать «площадью 2,68 га (пашни)».

* * *

Февраль уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-998-94-73. 8-906-385-59-98.

* * *

Куплю квартиру или дом, не меньше 48 кв. м.
Тел.: 8-937-378-74-18.

* * *

Декабрь пуçламăшĕнче улттăмĕш пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-905-341-57-20.

* * *

Тăхăр уйăхри хĕрлĕ тĕслĕ тынашки сутатпăр. Шомик ялĕ. Тел.: 8-919-651-43-50.

* * *

Муниципальному унитарному предприятию жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» на временную работу требуется юрисконсульт с высшим юридическим образованием. Опыт работы желателен. Оплата труда – согласно штатному расписанию.

* * *

Февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура тынашки сутатăп. Тел.: 8-927-860-62-35.

* * *

Продаю девять коз.
Обращаться по тел: 8-937-956-33-63. Зоя.

* * *

В торговый павильон «Фото-Экспресс» требуется на постоянную работу продавец-кассир (со знанием компьютера). Обращаться по тел.: 8-903-065-75-85.

* * *

Виçĕ ĕне сутатăп: иккĕмĕш пăруламалли хура тĕслĕ, пиллĕкмĕш пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ, саккăрмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ. Рыккакасси ялĕ.
Тел.: 8-937-376-16-54.

* * *

Продаются столбы оградные, кольца ж/б, сетка-«рабица», трос, проволоки, автомашина ГАЗ-52 грузовая, фургон, трактор ЮМЗ-6. Цены ниже рыночных, заводские. Выполняем электромонтажные работы.
Тел.: 8-905-342-98-11.

* * *

Вĕтĕ çĕр улми сутатăп.
Тел.: 8-927-847-20-55, 8-952-021-75-90. 2-3.

* * *

Март пуçламăшĕнче пĕрремĕш пăруламалли ăратлă ратăри хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-906-386-81-07.

* * *

7–8 уйăхри хĕрлĕ-шурă тĕслĕ икĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 66-3-71, 8-960-311-05-17.

* * *

Виççĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă ĕне сутатăп.
Тел.: 8-919-664-80-35.

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:220701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Арсентьева Светлана Алексеевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:220701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, общей площадью 1.27 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:

Чăваш Республикин Культура, национальноссен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноссен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăк-раххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 09.10.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4683.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.